# Хусанкай

Хусанкай сăввисем пирки тавлашусем те пулкаларĕç. Хăшĕ-пĕри ăна - «пессимист» вăл, çĕнĕ пурнăç илемне курмасть, хальхи пурнăç урапипе тан кусса пыраймасть, вырăссен Есенин поэт хыçĕнчен каясшăн, çырма та вăл хăй çинчен çеç çырать тата темĕскер те калаçкаларĕç. Юптарни пит палăрать. Паллах ĕнтĕ, тĕрли тĕрлĕ шухăшлĕç, кунта эпĕр тавлашу хускатса ярса, «философствовать» тăвасшăн мар, апла туни питех вырăнлă пулмĕ, тетĕп. Авантарах вуласа тухар-ха, мĕн çинчен ытларах çырать Хусанкай, мĕнле çырать, хăйĕн çырас шухăшне епле илемлетет. Çеçпĕл Мишши хыççăн паллăрах поэтсенчен пĕр Хусанкай çеç тонĕккă çиçтемипе пит килĕшӳллĕ çырма пуçларĕ, вăл системăна пирĕн чăваш литературинче вăл сарса ячĕ тесен, пĕртте юптарса калани пулмĕ. Çапăнса тухнă кĕнекинче унăн çиллапĕкă системине çырни пĕр сăвă та çук. Тонĕккă çиçтемипе çырни (пĕлсе, пултаруллă çырсан) пит илемлĕ тухать. Хусанкай унпала пуринчен те аван, пуринчен те хитре çырать вара. «Хури» ятлă сăвви вăл вырăс поэтсенчен кая çырманнине пурне те аван кăтарт-са пачĕ. Сăвă пур енчен те килĕшӳллĕ, ниçта ытлашши вырăн, килмен йĕрке çук. Кĕнекере çапăннă сăввисем Хусанкай талантне, пуринчен ытла вăл тăрăшса, чĕререн çырнине пит аван кăтартаççĕ. Хальхи пурнăçа поэт хавас куçпа пăхни, уншăн тăрăшни аван палăрать. Революциччен вăл сăвăсем çырман; пит çамрăк пулнă вăл вăхăтра. Кĕнекере тăватă çул каялла çырнинчен «ватăрах» сăвăсем курăнмаççĕ. Çавăнпа пуль поэт сборнĕкне «Уяртсан» ят панă. Паллах ĕнтĕ, асăннă çулсенче ĕлĕкхи тискер вăрçă кăна мар, ĕçлекен халăха çăлăнăç, ĕмĕр пулман ирĕк паракан краштăн вăрçи те чарăннă вăхăт. Классен кĕрешĕвĕ час чарăнас çук-ха вăл, анчах вăрçăллă коммунизм вăхăтĕнчи кĕрешӳпе хальхи вăхăтри кĕрешĕвĕн уйрăмĕ пур, ун чух хĕçпăшалпа кĕрешнĕ пулсан, халь... ĕçпе, тар юхтарса кĕрешеççĕ.

Поэтсем çĕнĕ пурнăçшăн хăйсен сăввисемпе кĕрешеççĕ.

Ĕмĕр кĕтнĕ ĕмĕт çитрĕ

Халăху сан ирĕкре,

Хурлăх чулĕ ванчĕ, çĕтрĕ,

Хурлăх чулĕ тĕлĕкре.

тет вăл «Ирĕк çĕршывăма» ятлă хитре сăввинче. Е тата:

Хытăрах янтра,

Çĕнтерӳ юрри!

Пĕтĕм çĕр тавра,

Пĕттĕр мул хурри!

(«Ирĕк тимĕрçĕ», 3 стр.)

Ку сăвăсене нихăш енчен те хурлама çук пуль тетпĕр, кунта пурте килĕшӳллĕ - шухăшĕ те, техникки те. Е тата çак малалла кăтартнă сыпăксене илсе пăхар:

Мăшкăллăх, чураллăх сӳнчĕ те кĕлленчĕ,

Хĕрхенӳсĕр пулчĕ тимлĕ Вут ама.

Ç и т м ĕ л çичĕ халăх ирĕкĕпе килленчĕ,

Харăссăн пикенчĕ ăна мухтама.

(«Тăвăл иртсен», 2 стр.)

Хĕп хĕрлĕ сунтал

Пĕтĕм çĕр тавра

Хĕлхем сирпĕтет,

Пĕттĕр, мул хурри!

Ĕççыннин вăйхал

Çӳлерех çĕклен,

Ӳсет те ӳсет...

Ирĕк мăлатук!

Хытăрах янра,

Сана хĕсĕрлен -

Çĕнтерӳ юрри!

Урăх чĕрлес çук.

(«Ирĕк тимĕрçĕ», 3 стр.)

Çапла килĕшӳллĕ, илемлĕ çырасси çăмăлах мар вăл: «хăли-хали» çырнипе кăна капла хитре çырма çук. Поэт ăна аван пĕлет, ун çинчен вулакансене систерет.

Пуç миминче туптаса

Сăмах хыviччен -

Хавшак чунпа çунăхса

Чылай кĕлленен.

Çырнă сăвву çынсене

Виттĕрех тесен -

Шур хут çине сăмах мар,

Хĕлхем сирпĕтен.

Ак поэтăн ĕмĕрех

Тапакан чĕри

Сăвă çырма çав терех

Ансат тетĕр-и?

(«Сăвăç», 37 стр.)

Ун пек чĕререн каланă сăмахсем сахал мар кĕнекере. Акă «Тăван поэта» ятлă сăввинче мĕн каласа çырать тата:

Этем тени ĕнтĕ выльăх мар,

Мĕншĕн татас çунан ĕмĕте?

Пĕри сӳнсен тепри ялкăшар,

Юрлар, телей сунан ĕмĕрте!

Епле пулсан та кĕнекере, нумай, çурри ытла, çĕнĕ пурнăçа мухтаса, хĕпĕртесе çырнисем; пурне те шутласа тăраймастпăр кунта: вăл сăвăсенче поэт халлĕхе йĕркеленсех çитмен, анчах епле те пулсан

ирĕклĕ, савăнăçлă пурнăç çине тĕрĕс куçпа пăхать. «Çирĕм улттă», «Ахăр самана», «Уй-хир юрри», тата çӳлте кăтартнисенчен пуçне, урăххисем те пур.

Хĕвелĕн те тĕттĕм пăнчăсем пур тенĕ пек, Хусанкайăн та кĕнекинче килмен вырăнсем пурах, ăна та тӳррипех калас пулать. Унăн элегийĕсене каламăпăр, ун пекки кашни поэтăн пулать вăл: «Вăрман тăрăх», 7-мĕш стр. Унта поэт хăçан та пулин çӳçĕ кăвакарас вăхăт çитессе астуса кулянать: юлашкин-чен çапла пĕтерет:

Иксĕмĕр-ха, тусăм, иксĕмĕр,
Эх, мăнтарăн çамрăк ĕмрĕмĕр.
Чăнах йĕпхĕн хура кăтрама
Пӳрнĕ-шим пĕрре кăвакарма,

тет вăл. Ун пек шухăшсем кашни çын пуçне килсе çапăнаççĕ, ĕлĕкхи поэтсем те сахал çырман: «Брожу ль вдоль улиц шумных...» Пушкинăн, «Выхожу один я на дорогу...» Лермонтовăн. Вырăссен хальхи поэтсене шутласа та кăларма çук. Хăй пурнăçĕ çинчен шухăшлани тиркевĕ çук, анчах Хусанкайăн пурнăç йĕрки çинчен кулянса çырнă хăш-хăш сăввисем - лирикăллă сăввисем - вăхăчĕ-вăхăчĕпе поэт тĕрĕс çултан пăрăнса кайнине кăтартаççĕ. Пуринчен ытла вăл лирикăпа çырать. Çавăнпа та йăнăшсемшĕн поэта вăрçмасан та кăтартма, астутарма кирлех пирĕн.

Хусанкайăн талантне чăвашсем пурте пĕлеççĕ, ун сăввисене пит юратса вулаççĕ, ун майлă çыракансем, ун мелне хăнăхас текенсем çамрăксен хушшинче халь пит нумай.

Акă «Анне çырăвĕ» сăвă. ... Амăшĕ ывăлне çыру янă та, поэт хуйха ӳкнĕ. Амăшĕ килти çитменлĕхсем çинчен çырать: «вăл çук, ку çук...» налукне илеççĕ тет. Çапла, çĕнĕ пурнăç пур çĕрте те картне кĕрсе ларнă теме çук-ха, пурнăçра халь те çитменлĕхсем, йăнăшсем пур-ха, ялсенче

вĕсем тата ытларах. Ĕçлекен халăх та кĕске вăхăтрах тем туса лартаймасть. Поэтăн ун пирки чĕри сурать.

Анчах эс ан хуçăл, эпĕ çамрăк,
Çитĕнем-ха, çитĕнем пăртак.
Эс пĕлен вĕт - пысăкланман çарăк
Яланах вăл парăнать хурта -

тет вăл çав сăввинчех. Апла пулсан поэт пирĕн хăй йăнăшнине хăй те аван сисет, çавăнпа тĕрĕс çулпа утма тăрăшать.

Пулĕ акă пурнăç çак çĕртех,
Çак паян тискер сăнлă хиртех,
Яран, яран тĕрлĕ пуссене
Ларса канăр вара ун чухне.

(«Пусăра», 3 стр.)

Е тата:

Ирĕк çил çăварлăхланĕ мĕнтарăн,
Хăй тĕлĕн кĕрлес çук шыв сикки,
Пур вăя та этем пăхăнтарĕ,
Пур хăватăн та пулĕ чики.

(«Ахăр самана», 41 стр.)

Тĕрĕс сăмах: «пур вăя та этем пăхăнтарасси» куçа курăнсах тăрать. Çав вăхăтра вара, чăнахах, пурте тутă, пурте телейлĕ пулĕç.

Такам çине çиллентĕм эп паян,
Такамсене сурсах вăрçас килет.
Пĕри çак çĕр çинче çĕрме пуян,
Тепри юнашарах выçса вилет.

тет вăл «Анне çырăвĕ» ятлă сăввинче. Тӳррипе каласан, ку сăмахсене вăл мар, амăшĕ калать. Ĕçлекенсемпе хресченсен влаçĕ, епле пулсан та, чухăнсене мĕн вăй çитнĕ таран пулăшать. Хальхи вăхăтра пурте пĕр пек, çителĕклĕ пурăнай-маççĕ пулсан та, чухăнсем ĕлĕкхи пек

нушаланмаççĕ, вĕсен пурнăçĕ çултан çула çăмăлланса, аванланса пырать. Поэт хăй те амăшне хĕрхеннĕ май, çемçе чĕреллĕскер, хăш вăхăтра... влаçа ÿпкелеме пăхать. Анчах халь вăл вăхăт иртнĕ ĕнтĕ. Тепĕр çырăвĕнче вăл амăшне тÿрех çапла каласа çырать:

Мĕн тăвар, аннеçĕм, мĕн тăвар?
Пурнăç улăштарчĕ çав мана.
Елле ĕлĕкхишĕн макăрар?
Халь вĕт ĕнтĕ çĕнĕ самана.

*(«Анне патне», 54 стр.)*

Юлашки вăхăтра Хусанкай - поэт хальхи çĕнĕ пурнăçа тĕрĕс ăнланни, уншăн тăрăшни тата та ытларах палăрма пуçларĕ. «Çирĕм улттă» ятлă поэминче çĕнĕ пурнăçшăн чĕререн ĕçлесе революцишĕн хăйсен пуçĕсене хуракансене мухтаса юрлать. Граждăн вăрçи вăхăтĕнче, сăвăра асăннă Баккури 26 комиссара акăлчансем çеçен хире илсе тухса персе вĕлернĕ. Вăл историне пирĕн ĕçлекенсемпе хресченсем пит аван пĕлеççĕ. Петĕр Хусанкай çак асăннă хитре поэминче вĕсене епле улталани, епле нушалантарни çинчен тата вĕсем хăйсене персе вĕлернĕ вăхăтра епле паттăр тăни çинчен, вĕсен шухăш-кăмăлне ĕмĕр манми сăмахсемпе каласа кăтартать. Çавăнпа вăл хуйхăллă историйĕ авантарах пĕлес текенсене поэмăна тепĕр хут авантарах вуласа тухма сĕнетпĕр. Акă епле хитре, епле илемлĕ кĕвĕпе пуçласа ярать вăл сăввине:

Çирĕм улттăн вĕсем
Çирĕм улттăн,
Çирĕм ултă çулпуç
Сахал мар.
Çирĕм улттăн вĕсем
Çирĕм улттăн
Çирĕм ултă

Чăн-чăн комунар.

Çавăн пек хурлăхлă историйĕ каласа пама формине те, ритмине те çав тери килĕшӳллине тупнă. Унта кашни геройĕ: революцишĕн паттăр вилекен комиссарсен сăнĕсем те, вĕсене асаплантарса персе вĕлерекен тискер кайăк пек тăшмансен сăнĕсем те ывăç тупанĕ çинчи пек уççăн курăнса тăраççĕ. Коммунарсене айăпсăрах персе вĕлернине шеллесе çынсем кăна мар, тинĕс те йĕрет.

Каçпи тинĕс чăнах та йĕрет-çке.

Каçпала эс итле-ха, сăна:

Шаумян, Азизбек, Джапаридзе

Каçпи тинĕс чăнах та йĕрет-çке

Çирĕм ултă ята асăнать.

(Нумай вырăн йышăнас мар тесен кунта эпир йĕркесене урăхла çыратпăр. С. Я.)

Шаумян (Бакури Халăх Комиссарĕсен Совечĕн Председателĕ) тĕрмере те вăрçăри пекех хăйне тивĕçлĕ, паттăр тытать. Çамрăк ывăлне акă мĕнле манми сăмахсем каласа хăварать вăл:

Красноводск -

Чăвашла хĕрлĕ шыв вăл

Хĕрлĕ шывăн тĕрми пĕчĕк мар.

Шаумян калаçать: -

Çакăнта ак хупаç пăчăхма.

Мĕншĕнне ăнланмашкăн эс çамрăк,

Камшăнне те чухлаймăн-ха халь:

Кăлăхах сан пуçна эпĕ çаврăн

Пысăк шухăш кӳртсе

Так ахаль.

Çавăнпа ытлашши сăмахсемсĕр

Уйрăлмашкăн тивет аçуна,

Самана пит хăрушă та сĕмсĕр.

Çак вутра ман асаплăх çунат.

Ман çеç мар тĕнчери пур ĕçхалăх

Паян кун çăлăнăç тилмĕрет.

Малашне тек асаймĕ чуралăх

Юлашки хут ларан тĕрмере. —

Шаумян асаплă чуралăх пĕтессе аван пĕлет, ĕçлекенсемпе хресченсен вăйне, вĕсем çĕнтерессе чунтан шанать. Çавăнпа вăл хăй пуçне те шеллемест, çавăнпа вăл хăрушă тĕрмере ларнă чух та чунтан пуçне усмасть, ăна хăратса та, йăпатса та тĕрĕс çултан пăрма çук. Акă епле вĕрентет вăл ывăлне:

«Сывă пул,

Ан хуçăлăрсам —

Анчах курăпăр халĕ,

Ыранхи тĕлекрам мĕскер калĕ

Ан кулянăр.

Виличчен ырă-сывă ларсан».

Тăшмансем «тискер кайăк пек» усалне те манмасть вăл. Телекрам иличчен сывă ларасса та шанмасть. Революцишĕн тĕрмере тарăхса ларакан ĕçлекенсемпе хресченсем, ăна унта та чыслаççĕ, унтан çăлăнăç кĕтеççĕ. Вăл сăмахне каласа пĕтерсенех «Сывă пултăр Капкас истеррори» тесе кăшкăрса яраççĕ тĕрмери çынсем.

«Шаумян çĕлĕкне хывса илчĕ,

Куçĕсем ялкăшаç çиçĕм пек

Итлĕр ав калаçать Джапаридзе,

Итлĕр ав калаçать Азизбек».

Тăшмансем çĕрĕпех канашлаççĕ. Поэт вĕсен усал шухăшне аван пĕлет, вĕсене витĕр курать, вĕсен сăнсăр сăнне пит аван кăтартса парать.

Реджинальд куппере пĕчченех мĕн

Çирĕм улттăшăн пусă алтать.
Вакунсем алланса пынă майăн
Вăл пушшех хĕтĕртет хăй чунне.
Шаумян! Мана тин эс пуç тайăн
Çак хĕçе хам çĕкленĕ чухне...

Реджинальд шухăшне аван куратпăр. «Мана тин эс пуç тайăн» тесе шăлне çыртать вăл, Шаумяна пăхăнтарасшăн. «Куçĕсем унăн этем юнĕшĕн выçă, вăрă хурах пек çиллес те хаяр». Анчах коммунарсем ăна пăхăнма мар «Çейттун маршĕ» юрласа пыраççĕ.

Шурăмпуç хăпарать
Чечен ир
Ни разъезд ку, ни станци те мар...

Çакăнта вĕсене вакунтан илсе тухса персе вĕлереççĕ. Реджинальда пуç таймаççĕ вĕсем.

Тӳрриех калас пулать, кун пек, пур енчен пиçсе çитнĕ илемлĕ поэма пирĕн чăваш литературинче пулман-ха. Кун пек сăвва талантсăр, хастарлăхсăр çырма çук. Хусанкайăн пултаруллăхĕ пысăк. Вăл çĕнĕ пурнăçа тĕрес куçпа пăхать.

Вăйлă кĕрешӳре шеллӳ çуккине сăвăç хăй те пит аван пĕлет, çавăнпа вăл айăпсăр коммунарсен юнне юхтаракан тискер кайăксемпе тăрăшса кĕрешме чĕнет.

«Икçĕр çиччĕмĕш юнлă çухрăм
Таса юн эс пĕр айăпсăр юхрăн
Икçĕр çиччĕмĕш юнлă çухрăм
Вăл паян та çаплах хĕрлĕ-ши.
Саксаул тĕмĕсем чĕрĕ юнлă.
Ăна курĕç пайтах мĕльюн
Çирĕм улттăн çеç мар эпир юлнă
Саксаул тĕмĕсем чĕрĕ юнлă

Хăйăра сăрхăнаймĕ вăл юн.
Ав самум та çаплах йĕрсе илчĕ,
Тинкерсе эс итле-ха, сăна:
Шаумян, Азизбек, Джапаридзе
Ах самум та çаплах йĕрсе илчĕ:
Çирĕмултă ята асăнать.

Пĕлтĕр «Сунталăн» 11 - мĕш №-че Хусанкайăн «Хури» ятлă поэми çапăнчĕ («Уяртсан» ятлă сборникне темме кĕреймен вăл. Унта вăл чăвашсен паллă революционерĕ Хури (Тимофей Николаев) çинчен çырнă.

Ку сăвине çыриччен Хусанкая паллă поэт тенĕ пулсан, кун хыççăн вăл пирĕн чи паллă, чи пултаруллă поэт шутне кĕрет. Вăл поэмине те «Çирĕм улттă» пекех тĕлĕнмелле хитре çырнă. Поэми пурĕ 10 юрра уйрăлать. Кашни юрринче пĕр пек (5) строффа, кашни строффинче 10-шар йĕрке. Кашни юрри «пурнăç сыпăкне» кирлĕ таран çутатса парать. Произведенине тимлĕн пăхса тухсан та, пĕр ытлашши сăмах тупма çук: пурте кирлĕ, пурте вырăнлă:

«Ан чарăн, етре,
Юрла,
Кăвак пĕлĕтре -
Çурла.
Ан çывăр, çĕнĕ
Хурал,
Октябрь чĕнет -
Хускал,
Тĕлле тĕнчене путвал.

Акă тата чăвашсен ĕлĕкхи, революцичченхи пурнăçне малтанхи юрăра епле пултаруллă кăтартса парать поэт:

Пĕлместĕн-и эс,

Чăваш,
Мĕншĕн çак кĕтес
Йăваш?
Мĕншĕн çакăнта
Мĕн пур
Этем тӳсейми
Хĕнхур?
Ĕçлетĕр вĕт пит
Маттур.
Ĕçлетĕр ĕмĕр
Ĕмĕр.
Çапах саплăк çеç
Ĕмĕр.
Çапах çăпата ура,
Пурнан пӳртĕрсем
Хура...

Хусанкай кашни çĕнĕ произведени çырмассерен çĕнĕрен çĕнĕ форма кăларса пырать, пурте унăн калама çук хитре, илемлĕ тухаççĕ. Поэт пĕр вырăнта тапăртатса тăмасть, малалла утать. Тăван поэзие юратса чунне парса ĕçлет. Малашне вăл «Çирĕм улттăпа» «Хури» пеккисене тата нумайтарах çырса парĕ тесе шанатпăр.

1928 ç.